28-мĕш ĕул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
11
ЫТЛАРИКУН
240 (6991) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ЯЛ СОВЕТ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ

Совет çĕршывĕнчи государство тытăмĕн системинче ĕççыннипе депутачĕсен ял Совет исполкомĕсем пăллă та хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ. Ял Совечĕ ялти социализм строительствин пăллă сыпăкĕ, совет влаçĕн вырăнти представителĕ пулса тăрать.

Юнлă вăрçă шавĕ лăпланса, пирĕн Тăван çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне куснă хыççăн, пĕтĕм çĕршыв умне, ял Совечĕсем умне те çав тери пысăк задачăсем тухса тăраççĕ. Совет правительстви, Ленин—Сталин партийĕ вăрçă кунĕ сурансене хăвăртрах тăрлетсе, çĕршыва малалла аталантарассишĕн çав тери тăрăшаççĕ.

Халăх хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарас тĕлĕшпе Советсем, вăл шутра вырăнти Советсем те мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен В. М. Молотов юлташ çапла каларĕ: «Советсем мĕнпур халăхсене нацийĕ культурăна пĕрмаях малалла хăпартса пыма май панинче, нацийĕ талантсене вĕрентсе çирĕплетессишĕн активлăн тăрăшма, пĕртан правăллă совет халăхĕсем хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕрне тăванла пулăшассине ӳстерсе пыма май панинче, — çаксенче пуринче те эпир совет демократийĕн пурне те çĕнтерекен вăйне, вăл мĕнпур халăхсене чăн-чăн прогрессиллĕ аталатарас ĕçре аслă вырăн йышăнса тăнине куратпăр».

Совет влаçĕ пулнăранпа, большевиксе партийĕ тăрăшнипе, ялсенче политика енчен çирĕп, пысăк опыт туяннă совет работникĕсен йышĕ пит нумай ӳснĕ. Тăван çĕршыва юратса унăн чунчĕрене парса ĕçлеме вĕсене Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ вĕрентсе пычĕ. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче совет работникĕсен кадрĕсем пысăк тĕрĕслевре пулчĕç. Халĕ вĕсем мирлĕ аталану тапхăрĕ кăларса тăратнă ыйтусене государство çыннисене тивĕçлĕ пек татса парассĕ.

Ял Совечĕсен ĕçĕсем пысăк та нумай енлĕ. Вĕсем хăйсене тивĕçлĕ хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене пурне те татса пама пĕлмелле, ĕççыннисен анлă массисемпе таччăн сыхăнса ĕçлемелле, ял Совечĕ сумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисен ĕçне чĕртсе ямалла. Ял Совечĕ хăйĕн территорийĕнче государство йĕркелĕхне сыхлать, законсем пурнăçа кĕрсе пынисене тĕрĕслет, Сталинла Конституци граждансене панă правăсене хӳтĕлет, çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн тăрăшать.

Çапла ĕнтĕ, ял Совечĕсем вĕсем ялти халăха чи сывăх та тăван чăн-чăн демократиллĕ власть органĕсем пулса тăраççĕ.

Ял Совечĕсем мĕнле ĕçлени чылай енчен ял Совечĕн председателĕ епле ĕçленинчен, политика тĕлĕшпе вăл çирĕп пулнинчен, культурăллă работник пулнинчен килет. Совет органĕсен руководителĕсем халăхпа çирĕп сыхăнса тăнипе вăйлă. Тĕрлĕ ыйтусем тăрăх халăхпа канашлама пĕлни, массăсем паракан сĕнӳсемпе усă курма тăрăшни, ялта пулса иртекен çĕнĕ явленисене шута илме пĕлни ял Совет председательне хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатма пулăшать.

Мĕне пĕлтерет-ха ял Совет председателĕ тĕрĕс ертсе пыма пĕлмелле тени? Чи малтанах вăл ĕçре чи кирлине суйласа илме пĕлсе, ял Совечĕ пĕрлештерсе тăракан ялсенче хуçалăхпа культура ĕçне аталантарас плансене хастарлăн пурнăçа кĕртсе пынинче пулса тăрать. Пирĕн республикăра лайăх ĕçлекен ял Совет председателĕсем сахал мар. Вĕсем колхоз пурнăçĕпе куллен интереслемеççĕ, ял Советне кĕрекен культурăпа сутĕç тата ытти учрежденисене ĕçре пулăшу парса тăраççĕ.

Сăмахран, Октябрьски районри Туçа ял Совечĕн ĕçне илер. Ял Совет председателĕ пулса кунта Н. Васильев юлташ ĕçлет. Ял Советне кĕрекен 4 колхозăн ĕçне вăл нихăçан та хăй куçĕнчен вĕçертмест, колхоз руководителĕсене пĕрмаях пулăшса пырать. Ял Советне кĕрекен колхозсем кăçал ялхуçалăх çулне иртнĕ çулхинчен нумай малтан тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕç. Государствăна тырă парас плана ял Советне кĕрекен колхозсем сентябрь уйăхĕнчех пурнăçларĕç, ку ĕçре ял Совет председателĕ Н. Васильев юлташ уйрăмăнах çине тăрса тăрăшни палăрчĕ.

Туçа ял Совечĕн исполкомĕ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. IV-мĕш кварталти финанс планне ял Совечĕ Октябрь революцийĕ 28 çул тултарнă тĕле 125 процента çити тултарнă. Ял Совечĕ ертсе пынипе Хурамал Çырминче кĕпер хывнă, фельдшер пункчĕ уçнă, культпросвет учрежденийĕсем валли 40 тонна торф кăларса турттарнă, 60 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртсе пынă çĕрте ял Совет исполкомĕн председателĕ хăй те нумай тăрăшнă, ялти актива та ĕçе хутшăнтарса пынă.

Ял Совет председателĕ пултаруллă тата çав тери хастарлă пулсан та, вăл хăй пĕччен кăна ĕçлесен, ялти интеллигенцие, комсомолецсене, ялти актива ĕçе хутшăнтармасан, унăн ĕçĕ çителĕклĕ таран ăнăçлă пулма пултараймасть. Çавăнпа та ял Совет председателĕн хăйĕн аппаратне те тивĕçлипе ĕçлеттермелле, ял Совечĕн ĕçне халăха ытларах хутшăнтарса пымалла.

Совет ялĕнче пурнăç вĕресе тăрать, нимĕç фашисчĕсемпе Япони империалисчĕсене çапса аркатнă совет çыннисем халăх хуçалăхне аталантарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Совет ялĕн экономики, унăн культури аталанса пырать, совет çыннисем хăйсем те политикăпа культура тĕлĕшĕнчен ӳссех пыраççĕ. Ял Совет председателĕ пурнăçран юлас мар тет пулсан, унăн тăтăшах вуласа, вĕренсе пымалла, çак ĕçре вĕсене парти организацийĕсем, ĕççынни депутачĕсен район исполкомĕсем пулăшса тăмалла.

Совет Союзĕн халăхĕ халĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. «Сĕнĕ, пĕтĕмĕшле суйлавсем.—тенĕ В. М. Молотов юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладра, — Отечественнăй аслă вăрçăра совет государстви тӳссе ирттернĕ мĕнпур тĕрĕслевсем хыççăн пулса иртеççĕ. Пирĕн халăх суйлав урнисем патне çак çулсенче туяннă политикăллă пысăк опытпа пуянланса пырать, хамăр çĕршывăн кунсулĕ çинчен, Европăри тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсем çинчен нумай шухăшласа пăхнă хыççăн пырать».

СССР Верховный Совечĕн суйлавне хатĕрленес ĕçре вырăнти Советсем, вăл шутра ял Совечĕсем те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Ялти актива анлăн хутшăнтарса, ял Совечĕсем суйлавçăсен списокĕсене тĕплĕн туса хатĕрлемелле, суйлав ирттерме пӳлĕмсем хатĕрлесе çитермелле, суйлав ирттерме кирлĕ япаласене халех йĕркелесе хумалла т. ыт. те.

Суйлава хатĕрленнĕ май ялсенче массăсен политикăллă активлăхĕ нумай ӳсни уççăнах палăрса тăрать. Çав ӳсĕмпе, çав çĕкленӳпе ял Совечĕсен ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе, 1946 çулхи суракине хатĕрленес тĕлĕшпе усă курма тăрăшмалла. Государство влаçĕн чи аслă органне суйлама пур енчен те кăтартулăн хатĕрленесси, суйлавсене çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илесси—ĕççынни депутачĕсен ял Совечĕсен пысăкран та пысăк задачи пулса тăрать.

Ял Совет председателĕсен çак ĕçре пĕтĕм вăя хурса тăрăшса ĕçлемелле.

Ăмăрту сарăлсах пырать

ИЕПРЕÇ. **(Телефонпа).** СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Чернореченски автомобиль çулĕ çинче ĕçлекенсем вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннехинче хĕллехи планне суйлав кунĕ тĕлне 80 процент тултарма, кварталти ĕç тухăçлăхне 107 процента çити ӳстерме, техникăна вĕренес ĕçе 15 çынна явăстарма тата рабочисем пурăнакан бараксене ăшă тытакан тума обязательство илчĕç. Хăйсем илнĕ обязательствăсене рабочисем кăтартуллăн пурнăçласа пыраççĕ. Рабочисен баракĕсене тĕплĕн юсаса, ăшă тытмалла тунă, халĕ кунта ытти ĕçсене пурнăçлассишĕн ăмăрту сарăлса пырать.

В. АНДРЕЕВ.

Иван Мучи юбилейне палăртни

Кăçалхи декабрĕн 8-мĕшĕнче чăваш совет писателĕсем, вулакансен Шупашкар хулинчи активĕпе пĕрле, чăвашсен сатирăпа юмор литературин никĕсне хывакан Иван Мучи писатель çуралнăранпа 50 çул тултарнине тата вăл литературăра 25 çул хушши ĕçленине палăртса уявларĕç.

Чапла пухăва Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн председателĕ А. Эсхель юлташ кĕске сăмах калаça уçрĕ..

Иван Мучин творчествăллă çулĕрĕ çинчен Хветĕр Ураи писатель доклад туса пачĕ.

Юбиляра писательсен Союзĕн правленийĕ ячĕпе Шавлы юлташ, «Чăваш Коммуна» хаçатра ĕçлекенсен коллективĕ ячĕпе—Яковлев (Саламбер) юлташ, Чăвашсен государство издательства ячĕпе—Золотов юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕпе Халăх творчестви çурчĕ ячĕпе—Селезнев юлташ, Чăвашсен государство академи театрĕ ячĕпе — ЧАССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Айзман юлташ, чăваш композиторĕсен ячĕпе—ЧАССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Хирбю юлташ саламларĕç.

Юбиляра пĕрле ĕçленисене аса илсе, чăваш халăх поэчĕ С. В. Элгер, Л. Агаков, Н. Васянка, К. Чулкась, И. Максимов-Кошкинский писательсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем Иван Мучин пурнăçĕпе творчествине тĕрлĕ енчен сутăтса пачĕç.

Юлашкинчен Иван Мучи хăйне юбилей ячĕпе саламланă юлташсемпе организацисене тавтурĕ, хăйĕн малашнехи творчество ĕмĕчĕсем çинчен каласа пачĕ. Вечер наркăмлă та интереслă иртрĕ

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандитатсем тăратаççĕ

ЧКАЛОВСКИ РАЙОНТА

СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе Чкаловски районта 31 суйлав участокĕ пулать. Районра халĕ участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Тури Туçари Чкалов ячĕпе тăракан колхозри парторганизацин пухăвĕ хăйĕн кандидачĕ пулма ВКП(б) членне Степан Александрович Тихонов юлташа тăратнă. Вăл нумай пулмасть Хĕрлĕ Çартан тавранна, правительство ăна икĕ Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе, 3-мĕш степень Мухтав орденĕпе тата «За отвагу» медальпе наградăланă. Иртнĕ суйлавра та Тихонов юлташ участокри суйлав комиссийĕн составĕнче ĕçленĕ.

Анат Туçари «Гвардеец» колхозри колхозниксен пухăвĕ колхозри пахчаçимĕç бригадин бригадирне, 61 çулти старике, вăрçă вăхăтĕнче «За трудовое отличие» медаль илнĕ Александр Павлович Заплаткин юлташа тата колхоз председательне, «За трудовую доблесть» медальпе наградăланă Роман Афанасьевич Баранов юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ колхоз учетчикне, Отечественнăй вăрçă инвалидне, Хĕрлĕ Çалтăр орденĕн кавалерне Иван Игнатьевич Уткин юлташа кандидата тăратнă.

Районри парти организацийĕнчен ВКП(б) членне, Хĕрлĕ Çалтăр орденĕн кавалерне, Отечественнăй вăрçă инвалидне Павел Адреевич Андреев юлташа кандидата тăратнă.

«Путь Ленина» колхозри колхозниксен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, Феоктист Иванович Мышкин колхозника кандидата тăратма йышăннă.

Пур ĕçре те малта

КАЛИНИНО. Услапари «Броневик» колхоз членĕсем аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче пысăк çитĕнӳ турĕç. Уйрăмах тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсем ăнăçлă пулса пычĕç. Колхоз 364 гектар çинчи тырпула 16 ĕç кунĕ хушшинче вырса пĕтерчĕ. Кĕлте кӳрес тата капан хывас ĕçсене те вăхăтра тытăнса, хăвăрт вĕçлерĕç. Çавăн пекех октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ. Октябрĕн 24-мĕшĕнче государствăна тырă памалли обязательствăна пурнăçланă. Кунпа пĕрлех планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне 937 пăт тырă панă.

— Пирĕн ĕçре пысăк ăнăçлăх тума политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилени, уйрăм сдельщинăпа ĕçлени пулăшрĕ.—тет партин пуçламĕш организацин секретарĕ С. Воробьев юлташ. Кунсăр пуçне, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра пĕрле апатланас ĕçе организацилени те сахал мар пулăшрĕ.

Тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе кунта коммунистсем 4 пуху туса ирттернĕ. Çав пухусенче яланах тырпул пухса кĕртес тата государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явнă. Пухусенче комсомолецсем, колхоз бригадирĕсемпе активистсем, агитаторсем пулнă.

Çапла кунта ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем, агитаторсем яланах ĕç нормисене тултарса тата ирттерсе тултарса пынă. Тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра ватти-вĕттипех пурте уйра пулнă, тырпула кĕсье срокра тата пĕр таккаламасăр пухса кĕртессишĕн кĕрешнĕ.

Агитаторсем В. Смирнов, Т. Петров, А. Кудрявцев, П. Евграфов, Т. Петрова, М. Куликова, А. Сорокина, И. Блинов юлташсем уйрăмах лайăх ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне тата большевикла сăмахăн чăнлăхне колхозниксене ăнлантарса, вĕсене ĕçре хавхалантарса пынă.

— Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçă майăн 9-мĕшĕнчех пĕтрĕ пулин те, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра воинсем таврăнаймарĕç. Çавăнпа та уйри хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче хĕрарăмсемпех, ватă-вĕтĕпех эпир кăçал Çĕнтерӳ ячĕпе нихăçанхинчен те хастарлăрах ĕçлерĕмĕр,—тет «Броневик» колхоз председателĕ В. Смирнов юлташ.—Арçынсемсĕрех Хирлеп шывĕ çинче арман пĕви пĕвелерĕмĕр. Арман çумĕнче шыв вăйĕпе авăн çапма итем турăмăр. Кунта 364 гектар çинчи тырпула шыв вăйĕпе çапса пĕтернĕ.

«Броневик» колхозра çĕрулмипе пахчаçимĕçсене те вăхăтра, çанталăк сивĕтиччĕн пухса кĕртнĕ.

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ. Колхозниксем хастарлăн та тăрăшса ĕçленĕшĕн ĕçкунĕсем тăрăх пысăк тупăш илеççĕ. Халĕ ĕçкунĕсем тăрăх тупăшсене валеçме хатĕрленеççĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм çĕрулми, 1,5 килограмм купăста, 500 грамм кишĕрне кăшман валеçсе панă та ĕнтĕ. Халĕ тата 1,5-шер килограмм тĕштырă валеçеççĕ.

Колхозра çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăннă. Паянхи куна акма кирлĕ вăрлăхсене ытлашшипех, 470 центнер çĕнтер уйрăм амбарсене хывса хăварнă.

«Большевик» колхоз уйхир ĕçĕпе пĕрлех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те малта пырать, вăл Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çирĕп тытса тăрать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те чылай ирттерсе тултарнă. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарнă; 1946 çулăн 35 центнер аш-какай, 3.000 литр сĕт, 12 килограмм çăм панă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитернĕ хыççăн колхозниксем вăрман хатĕрлеме тытăнчĕç. Вĕсем хăйсен планне 1945 çулăн ирттерсе тултарнă. 1945 — 46 çулхи кĕркуннехинче хĕллехи вăрман хатĕрлев сезонĕнче государство планĕ тăрăх 2100 кубометр хатĕрлесе турттарнисĕр пуçне районри организацисем валли 950 кубометр вутă хатĕрлесе турттарса кăларма пулаççĕ. Çавăн пек ĕçлеççĕ «Броневик» колхоз çыннисем.

Е. ВОЛКОВ.

Оргинструкторски отдел заведующийĕн качашлăвĕ

Декабрĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта парти райкомĕсен оргинструкторски отдел заведующийĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта СССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕç мĕнле пынине çинчен сӳтсе-явăрçç.

Канашлура Павлова (Етĕрне), Шаронова (Шупашкар хули), Стрельцов (Советское), Шорников (Чкаловское), Иванов (Хĕрлĕ Чутай), Красичкова (Канаш), Голландцева (Комсомольское), Краснов (Елчĕк) юлташсем хăйсен ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕç. Суйлава хатĕрленес ĕçе вырăнсенче мĕнле организацилени тата ку ĕçре пуçламĕш парторганизацисемпе уйрăм коммунистсем мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленесси хальхи вăхăтра чи пысăк та ответлă задача пулса тăрать. Суйлава хатĕрленес ĕçе вырăнсенче тивĕçлипе организацилесси оргинструкторски отделсен тивĕçĕ. ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ, Чкаловски, Етĕрне, Канаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче çак тивĕçе лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Етĕрне районĕнче суйлава хатĕрленес ĕçе план тăрăх туса пыраççĕ. Кашни суйлав участокĕнчех суйлав ирттерме çуртсем, урнăсем хатĕрленĕ. Халĕ суйлавçăсен списокĕсене тăваççĕ. Ку ĕçе профсоюзпа совет тата комсомол активне явăстарнă. Çак ĕçсемпе пĕрлех агитацине пропаганда ĕçне те анлăн туса пыраççĕ. Кашни пуçламĕш парторганизаци çумĕнчех агитколлектив (пурĕ 26 агитколлектив) тунă. Вĕсенче 426 агитатор тăрать. Пуринчен ытла Сăр Ирсери пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив ĕçне палăртса хăвармалла. Ку организацине (секретарĕ Кузьмина юлташ) икĕ суйлав участокĕ кĕрет. Агитколлективра пурĕ 37 агитатор. Ялсенче агитаторсене уйрăм килсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем хăйсен участокĕсенче кашниех 5—6-шар калаçу ирттернĕ. Кунсăр пуçне, колхозниксен пухăвĕсенче 5 доклад ирттернĕ. Çамрăк суйлавçăсем уйрăм кружокра вĕренеççĕ. Вăл кружока Усов коммунист ертсе пырать. Ватă колхозниксемпе колхозницăсем патне агитаторсем килсене сӳреççĕ.

Çак участоксенче вулав çурчĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсенче хаçат витринисем, справкăсем паракан сĕтелсем тунă, стена хаçачĕсем кăларнă. Клубсенче час-часах калаçусем пулса иртеççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Колхоз клубĕнче суйлава хатĕрленнĕ май ятарласа художествăллă пултарулăх кружокĕ организациленĕ.

Суйлава хатĕрленессине кунта хуçалăхри ĕççемпе сыхăнтарса туса пыраççĕ. Акă, Суворов ячĕпе тăракан, «Сура», «Комбайн» колхозсем государствăна срокчен тырă, пахчаçимĕç парса татнă, авăн çапса пĕтернĕ. Суйлавччен вăрман хатĕрлемелли, укçа-тенкĕ пухмалли плансене тултарма шутлаççĕ.

Канашлу вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл суйлава хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕ.

— Чылай районсенче агитаторсене ячĕшĕн çеç уйăраççĕ. ВКП(б) райкомĕсем вĕсемпе семинарсем ирттернипе е тата инструктаж панипех лăпланса лараççĕ. Участоксене тухса практикăллă пулăшусем памаççĕ,—терĕ вăл.

Çавăн пекех Чарыков юлташ агитаторсемпе тĕрĕс усă курманни çинчен, суйлава хатĕрленес ĕçе хуçалăх ĕçĕпе сыхăнтарса пыманни çинчен тата вулав çурчĕсем çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕ.

Канашлу оргинструкторски отдел заведующийĕсене ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтересшĕн сине тăрса ĕçлеме хушма хăварчĕ.

ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ

Декабрĕн 8-мĕшĕнче ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтерĕ.

Касхине пулнă юлашки ларура пленум кун йĕркинчи пур ыйтусем тăрăх та постановленисем йышăннă.

Пленум Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конгресĕнче пулнă совет делегацийĕн ĕçне ырланă. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн уставĕпе килĕшпĕ. Пленум ВЦСПС президиумне совет профсоюзĕсем Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине члена кĕни çинчен çав федерацин ĕç тăвакан комитетне пĕлтерме хушса хăварнă.

Пленум совет профсоюзĕсен представителĕсене Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн ĕç тăвакан комитетĕнче тата генеральнăй советĕнче конгресс йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме тăрăшма хушса хăварнă, пĕтĕм тĕнчери рабочисен пĕрлĕхне тата демократиллĕ çĕршывсенчи профсоюзсем пĕр-пĕринпе тăванла килĕштерсе ĕçлесе пырассине малалла та çирĕплетес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тума хушнă.

Пленум профсоюзсен пур членĕсене те, пур рабочисемпе работницăсене, служащисене, инженерсемпе техниксене, наукăпа искусство работникĕсене СССР Верховный Совечĕн çитес суйлавĕ пирки ВЦСПС чĕнсе каланине йышăннă.

ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ юлашки сăмах калана хыççăн пленум хупăннă. (ТАСС).

„Динамо" командин футболисчĕсем Мускава таврăлнă

Декабрĕн 8-мĕшĕнче «Динамо» командин футболисчĕсем Лондонран Мускава таврăннă. Лондонри, Кардифри тата Глазгори стадионсенче çав тери чаплă çĕнтерӳсем тунă совет спортсменĕсене хирĕç тухса кĕтсе илме аэродрома ВЛКСМ Цетральный Комитечĕн, Пĕтĕм Союзри физкультурăпа спорт комитечĕн представителĕсем, столицăри спорт общественноçĕн представителĕсем пынă.

Аэродрома спорт ялавĕсене çакса илемлетнĕ. Самолетсем çинчен ансанах динамовецсене хирĕç тухса кĕтсе илме пынă çынсем ытларах иллĕ. Вĕссене пысăк чечек сыхăсем панă.

Аэродрома кĕске вăхăтлăх митинг пулса иртнĕ. Пĕтĕм Союзри физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Романов юлташпа ВЛКСМ Центральный Комитечĕн секретарĕ Шелепин юлташ Англипе Шотландире Совет Союзĕн спорт чысне пултарулăн чапа кăларнă футболистсене хĕрӳлĕн саламланă. Вĕсене хирĕç «Динамо» командин тренерĕ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Михаил Якушин сăмах калана. (ТАСС).

Колхозри парторганизацин ĕçĕсем

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз—районра чи пысăк колхоз шутланать. Кунта 471 хуçалăх, 13 бригада. Вĕсенчен вуннăшĕ — уйхир бригадисем, ыттисем—çуртйĕр юсакан, пахчаçимĕçпе кок-сагыз лартса тăвакан бригадăсем. Колхоз 4 ферма, хурт-хăмăр утарĕ тата армансем тытать.

Пысăк артелĕн, паллах, ĕç те нумай. Апла пулин те Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ, пĕтĕмĕшле илсен, лайăх ĕçлет. Çакă вăл колхозра вăйлă парторганизаци пурринчен килет.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацире 14 парти членĕ тата 7 кандидат тăрать. Вĕсенчен чылайăшĕ колхозри ответлă выраçенче ĕçлеççĕ. ВКП(б) членĕ Е. Мартынов юлташ—колхоз председателĕ, В. Петрянкин—бухгалтер, М. Теньковпа Н. Грядкин—учетчиксем, А. Амасьев—бригадир, Е. Мартынов—ветсанитар, Е. Малов — кладовщик, И. Медяковпа М. Федоров юлташсем—ревизи комиссийĕн членĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Колхозри кашни ĕçрех коммунистсем организацилесе ертсе пынине курма пулать. Пуçламĕш парторганизаци, артель ĕçĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕсенче тăтăшах сӳтсе-явса, кирлĕ ыйтусемпе татăклă решенисем йышăнать, çав решенисене пурнăçа кĕртме коммунистсене кăна мар, ялти актива, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилет.

Çĕнĕ çултан вара парторганизацин 16 пуху пулса иртнĕ. Унта çуракине ирттерес, тырпул пухса кĕртес, государство умĕнчи парăмсене татас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата ытти нумай ыйтусене сӳтсе-явнă.

Парторганизаци колхозри çитменлĕхсене курса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Тĕслĕхрен, чăх-чĕп ферминче чăхсем вилме тытăннă, вĕсен тупăшĕ чакса пынă. Парторганизаци чăх-чĕп ферми мĕнле ĕçлени çинчен коммунистсен пухăвĕнче ятарласа ыйту лартнă. Унта ферма заведующийĕ ВКП(б) членĕ С. Маймулов юлташ отчет тунă. Пуху Маймулов юлташпа чăхсене пăхнă çĕрте ĕçлекен Л. Егоркина коммунистăна хытă критикленĕ, фермăри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăннă. Çав решение пурнăçа кĕртсе пынăçемĕн фермăри чăх-чĕп ĕрчетес ĕç лайăхланнă. Колхоз чăх-чĕп ĕрчетмелли плана тултарнă.

Çак çулăн пуçламĕшĕнче колхозри лашасем кăрчанкăпа чирленĕ. ВКП(б) райкомĕ хушнипе кăрчанкă чирĕпе кĕрешес ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Çакăн хыççăн колхозра газокамера туса, ун витĕр пур лашасене те кăларнă. Чирлисене уйрăмăн эмеллесе, часах сыватса çитернĕ.

Парторганизаци хуçалăхри задачăсене татса панипе пĕрлех массăллă агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Отечественнăй вăрçă эпир çĕнтернипе пĕтнишĕн савăнса, колхозниксем тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçленĕ. 1.688 гектар тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене, 110 гектар çĕрулмипе пахчаçимĕç планне палăртнă вăхăтра тата типтерлĕ пухса кĕртнĕ. Тырă вырма тухсан малтанхи кунсенчех авăн çапма тытăнса, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарнă. Хатĕрлев пунктĕсене пурĕ 3.611 центнер тырă, 1300 центнер çĕрулми, нумай пахчаçимĕç леçнĕ. Обязательствăран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фонине 400 центнер тырă, 500 центнер çĕрулми панă. Октябрьти революци 28 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленсе, колхоз государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта, укçа-тенкĕ тата ытти парăмсене те парса татнă. 1946 çулăн аванс шутĕпе 21 центнер аш-какай панă.

Колхозри хăшпĕр бригадăсенче авăн çапас ĕç юлса пынă. Парторганизаци ун çинчен сӳтсе-явса, авăн çапас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе колхоз правленийĕпе пĕрле тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Молотилкăсемпе туллин усă курса, тăпачăпа çапассине те организацилесе тата итем çинче ĕçлекенсен ĕç дисциплинине çирĕплетсе, авăн çапассине хăвăртлатнă. Çапла майпа колхоз ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ.

Халĕ колхоз вăрлăх, фураж фончĕсене т. ыт. те хывса, тупăша ĕçкунĕ тăрăх валеçме хатĕрленет. Малтанласа шутланă тăрăх, ĕçкунĕ пуçне 2 килограма яхăн тĕштырă тивмелле.

Парти организацийĕ фермăсен ĕçĕпе пĕрмаях интереслеммĕ пирки колхоз-выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те çитĕнӳ тунă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана (лашасемĕр пуçне) пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Сурăхсемпе сыснасем вара планпа пăхнинчен те йышлăрах.

* * *

Аслă Елчĕк ял Советĕнче Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацисĕр пуçне, территориллĕ парторганизаци пур. Ял Советĕнчи массăллă агитаци ĕçне çак икĕ парторганизаци пĕрле туса пыраççĕ. Территориллĕ партorганизаци çумĕнчи агитколлектива колхозри парторганизацирен 11 коммунист-агитатор кĕреççĕ. Вĕсем массăллă-ăнлантару ĕçне Ленин ячĕпе тăракан колхозра туса пыраççĕ.

Колхозри суйлавçăсене СССР Верховный Советне суйламалли Положение ăнлантарса парас тĕлĕшпе 21 агитучасток тунă. Çав участоксем çумне пултарулăн агитаторсене çирĕплетнĕ. Агитаторсем колхозниксене суйлав Положенине тĕплĕн ăнлантарса памă тăрăшаççĕ. Вĕсем кашни заняти умĕн семинарта пулаççĕ. Суйлав çинчен калакан литературăпа консультаци статьисене вуласа, хăйсен пĕлĕвне анлăлатаççĕ. Агитаторсен семинарĕсене агитколлектив руководителĕ, çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорĕ О. Васильев юлташ иртерет.

Суйлав Положенийĕпе СССР Конституцине, Сталин юлташ Конституци проекчĕ çинчен тунă докладпа Мускаври Сталински суйлав округĕнче каланă сăмаха колхозниксене пухса тата килĕрен сӳресе те ăнлантарса параççĕ. Суйлав ыйтăвĕпе калаçусем колхозниксем ĕçленĕ çĕрте те пулаççĕ. Парторганизаци секретарĕ В. Петрянкин, коммунист-агитаторсем М. Теньков, М. Федоров юлташсем калаçусене интереслă ирттереççĕ. Колхоз председателĕ С. Мартынов юлташ агитаци ĕçне В. М. Молотов юлташ Октябрь уявĕ ячĕпе тунă докладра ĕççыннисем умне лартнă задачăсемпе сыхăнтарса туса пырать.

Парти организацийĕсем агитаторсен ĕçне тĕрĕслесех тăраççĕ: агитколлективра, коммунистсен пухăвĕнче те вĕсен отчечĕсене итлеççĕ.

Аслă Елчĕк ял Совечĕ пысăк пулнă май, кунта икĕ суйлав участокĕ пулать. Ял Совечĕ участоксенчи суйлавçăсен хисепне шута илсе тухнă, суйлавсем пулмалли çуртсене палăртнă, вĕсене йĕркелесе хатĕрлеме тытăннă.

Çапла ĕçлет Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци. Парторганизаци ертсе пынине колхоз СССР Верховный Совечĕн суйлавне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет.

Т. ИВАНОВ.

«СССР СОЮЗĔН КОНСТИТУЦИЙĔ» ЧĂВАШЛА ТУХРĔ

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май Чăваш государство издательстви «СССР Союзĕн Конституцине» (Тĕп Законне) чăвашла пичетлесе кăларнă. Кĕнекен тиражĕ—10.000 экземпляр

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

ССР Союзĕн государство тытăмлăхĕ

ПĔРЛĔХЛĔ СОЮЗЛА ГОСУДАРОТВО

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе вырăссен рабочи класĕ, хресченсен масси пулăшса пынипе, пĕрремĕш совет государстви туса хунă. Российăн центрĕнче пуçланса кайнă рабочисемпе хресченсен влаçĕ тăванла пулăшса пынипе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, ĕлĕкхи патша империйĕнчи ытти халăхсем те совет республикисем туса хунă.

Шалти контрреволюцие тата ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç виçĕ çул хушши пынă вăрçă эпир çĕнтернипе пĕтнĕ хыççăн, совет республикисем Ленинпа Сталин пуçарăвĕ тăрăх 1922 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче союзлă пĕр государствăна—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕрлешнĕ.

Союзлă совет республикисен хисепĕ ерипенех хутшăнса пынă. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕн составне Россия, Украина, Белорусси, Азербайджан, Грузи, Армян, Туркмен, Узбек, Таджик, Казах, Киргиз, Карело-Финн, Молдаван, Литва, Латви, Эстони союзлă советлă социализмлă республикăсем кĕреççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче узбек халăхĕ, хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне çыру ярса, вĕсене Советлă Тăван çĕршывăн паттăрăн çапăçма чĕнсе каларĕ. Çав çырура Совет Союзне вунултă тăван тунă пысăк крепоçпе таныштарнă, ăна вĕсен пурин те пĕрле хŭтĕлемелле, тенĕ.

Чăнах та ĕнтĕ, Совет Союзĕ совет халăхĕсем пĕр-пĕринне тăванла килĕштерсе ĕçлесе тунă пĕр пĕтĕмĕшлĕ крепость пек пулса тăрать.

Вĕсенчен кашнинех хăйсен нацилле государство пур, пĕтĕмĕшпе пĕрле вара вĕсем нумай нацилле пĕр государство туса хураççĕ. Çак государствăн центрĕнче пĕр власть органĕ пур. Çак власть каларакан законсем союзлă пур республикăсемшĕн те обязательнăй пулса тăраççĕ. Кирек хăш союзлă республикăра пурăнакан гражданин та Совет Союзĕн гражданинĕ пулса тăрать. Совет Союзĕн хăйĕн государство гербĕпе ялавĕ пур, унăн столици—Мускав хули.

Союзлă совет республикисем пурте пĕрле союзлă пĕр государство пулни питĕ паха. Çакă ĕнтĕ вĕсене хăйсен экономикăллă средствисемпе вăйĕсене пĕрлештерсе, кашни республикăн тата мĕнпур Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕне культурине хăвăтлăн аталантарма май пачĕ. Çакă ĕнтĕ совет халăхĕсене хăйсен çар хатĕрĕсемпе вăйĕсене пĕрлештерсе Совет Союзĕн тата уйрăмăн кашни республикăн оборонине тĕреклетме май пачĕ.

Халĕ ĕнтĕ пĕр самантлăха çапла шутласа пăхăр-ха: ССР Союзĕнчи халăхсем 1922 çултах пĕр власлă, пĕр çаллă, пĕр халăх хуçалăхлĕ пĕр союзлă государствăна пĕрлешмен пулсан, фашистла Германие хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра вĕсем мĕн тери пысăк хăрушлăха кĕрсе ухнĕ пулĕччĕç. Вара эпир пирĕн çĕршыври халăхсене хăвăтлă пĕр Союза пĕрлештерни мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илетĕр.

Çакăн пек пĕрлештериммĕн пирĕн большевиксен партине, хамăран аслă çулпуçăмăрсене В. И. Ленинпа И. В. Сталина тав тумалла. Вĕсем мĕн совет власçĕ пуçланнăранпах мĕнпур совет халăхĕсене пĕр-пĕринне сыхăртма, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелле тăвас тесе тăрăшрĕç.

СОЮЗА ИРĔКЛĔН ПĔРЛЕШНИ

Совет Союзĕ вăл нумай халăхсен пĕрлĕхлĕ государстви пулнăран çеç вăйлă мар. Совет Союзĕн вăйĕпе çирĕплĕхĕ тата ăна чи демократиллĕ, чăн-чăн халăх демократийĕллĕ никĕс çинче тунипе вăйлă.

Ку таранччен нумай нацилле государствăсене яланах халăхсене çĕнтерсе илсе, пăхăнтарса, вăйпа пĕрлештерсе тунă. Совет Союзне ĕнтĕ пачах та ун пек туман. Совет Союзĕ вăл совет республикисем хăйсен ирĕкĕпе союзлă пĕр государствăна пĕрлешнипе пулса тăнă. Çакăн çинчен калакан решение совет халăхĕсен ирĕклĕн суйланă представителĕсем Советсен съездĕнче пĕр сасăлă пулса йышăннă. Нумай нацилле союзлă государствăна çакăн пек тунинчен тĕрĕсрехи те шанчăклăраххи урăх мĕнех пултăр вара!

Союзлă пур республикăсем те çав республикăсенче пурăнакан халăхсен ирĕкĕпе пулса кайнă, вĕсем хăйсен ирĕкĕпе Совет Союзĕн составне кĕнĕ. Сăмахран, Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи союзлă республикăсем çапла пулса кайнă: 1940 çулта Литвари, Латвири, Эстонири халăхсем ирĕклĕн сасăласа çĕнĕ парламентсем (халăх представителĕсен пухăвне) суйланă. Çак кашни çĕршывăн парламенчĕ совет власçĕ туса хума йышăннă. Вара çак çĕнĕрен пулса тăнă совет республикисене Совет Союзĕн составне йышăнма ыйтнă. СССР Верховный Совечĕ 1940 çулхи август уйăхĕнче, союзлă советлă социализмлă пĕртан республикăсем вырăнне хурса, Советлă Литвана, Советлă Латвие тата Советлă Эстоние Совет Союзĕн составне илме йышăнчĕ.

Совет Союзĕ пуçланса кайса, çирĕплĕнсе пырса, хăватлă вăй пулса тăнин никĕсĕсенчен пĕри ĕнтĕ вăл ирĕклĕн пĕрлешни пулса тăрать. Сталин юлташ çапла каланă:

«...Халăхсен кирек епле союзĕ те, халăхсем кирек епле майпа пĕрлĕхлĕ государствăна пĕрлешни те чăннипех ирĕклĕн пĕрлешни çинче никĕсленсе тăмасан, вăл çирĕп пулмă пултараймасть...»

ПĔРЛЕШНĔ РЕСПУБЛИКАСЕН ПĔРТАНЛĂХĔ

Союза хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ совет республикисем пурте пĕртан правалă. Совет Союзĕнче пуçпулса тăракан, пысăкрах правасемпе усă куракан написем çук, çавăн пекех тата Россия империйĕнчи пек пăхăнса пусмăрта пурăнакан написем те çук. Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен прависем тĕлĕшпе пурте пĕртан. Кашни союзлă республика, ăна кирек епле халăх тунă пулин те, унтă кирек мĕн чухлĕ халăх пурăнать пулин те, унăн территорийĕ темĕн тери пысăк пулсан та, унăн прависем союзлă ытти республикăсен прависемпе пĕртанах.

Тĕслĕхе Союзлă Россия Республикине илер. Халăх шучĕпе (унта 109 миллион çын пурăнать) тата территори пысăкăшĕпе (вăл 16,7 миллион тăваткал километр йышăнса выртать) илсен, вăл чи пысăк республикă. Хăй пуçланса кайнă вăхăта илсен, вăл чи малтанхи совет республики. Вăл — республикăсен амăшĕ: унăн территорийĕ çинче ытти нумай союзлă республикăсем пуçланса кайнă.

Совет власçне çĕнтерсе илсе çирĕплетес тĕлĕшпе, пĕртан правалă республикăсене хăйсен ирĕкĕпе союза пĕрлештерес тĕлĕшпе, çĕнĕ те ирĕклĕ, тулăх та культурăллă пурнăç тăвас тĕлĕшпе вырăс халăхĕ пирĕн çĕршыври ытти халăхсене калама çук пысăк пулăшу пачĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фашистла Германие çĕнтерес тесе вырăс халăхĕ нимĕн иккеленсе тăмасăрах çав тери пысăк жертвăсем турĕ. Хăйĕн уçăмлă ăс-тăнне, çирĕп характерĕпе чăтăмлăхне пула, ăна Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене ертсе пыракан вăй вырăнне хурса йышăнчĕç.

Анчах та вырăс халăхĕн, ытти халăхсемпе танлаштарсан, мĕнле те пулин уйрăм правасем пур-и-ха? Çук, унăн нимĕнле уйрăм права та çук.

Союзлă Россия Республикин те, 6,1 миллион çын пурăнакан, 2,7 миллион тăваткал километр йышăнса тăракан Союзлă Казахстан Республикин те, 3,2 миллион çын пурăнакан тата 85,5 пин тăваткал километр йышăнса тăракан Союзлă Азербайджан Республикин те, 1,1 миллион çын пурăнакан, 47,5 пин тăваткал километр йышăнса тăракан Союзлă Эстони Республикин те тата ыттисен те прависем пĕртанах.

Пĕрлешнĕ республикăсен пĕртанлăхĕ ĕнтĕ Совет Союзĕ пулса, çирĕпленсе, питĕ хăватлă вăй пулса тăнин тепĕр никĕсĕ пулса тăрать.

СОВЕТ ХАЛАХĔСЕН ТУСЛĂХĔ

ССР Союзĕ вăл—ют çĕршывсенчи пек, сăмахран, Швейцарири, Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсенчи пек аталь союзлă государство çеç мар.

ССР Союзĕ вăл—хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ совет халăхĕсен пĕртан правалă семьи. Вĕсем пĕр-пĕринне килĕштерсе ĕçлесе туслă пурăнаççĕ.

Халăхсен туслăхĕ вăл пирĕн кулленхи ĕçлана кĕнĕ. Ун çинчен пирĕн халăх юрă юрлать. Совет Союзне организацилесе ертсе пыраканнĕ çинчен, тĕрлĕ чĕлхене калаçакан совет халăхĕсене тăванла пĕр семьене пĕтĕçтернĕ аслă Сталин çинчен кашни халăх юрă хывать.

Совет халăхĕсен туслăхĕпе тăванлăхĕ Совет Союзĕн вăй-хăвачĕпе тĕреклĕхĕн тĕп çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Сталин юлташ 1935 çултах совет халăхĕсем хушшинче туслăх пур вăхăтра Совет Союзне нимĕнле тăшмансем те, шалти тата тулти тăшмансем те хăрушă мар, тесе калаçĕ. Çак сăмахсен тĕрĕслĕхĕпе чăнлăхне пурнăç хăй кăтартса панă. Ирĕклĕ республикăсен арканми союзĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн мĕнпур вăйĕпе çирĕплĕхне питĕ витĕмлĕ кăтартса пачĕ.

(Малалли пулать).

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнбергра суд туни

ДЕКАБРЕН 7-МĔШĔНЧИ ҪАҪХИ ЛАРУ

Декабрĕн 7-мĕшĕнчи çаçхи ларура Англи айăплаканĕсен представителĕ Робертс Германи çарĕсем Бельгие, Голландие тата Люксембурга малтанах хатĕрлесе хунă план тăрăх тапăнни çинчен калакан документсем панă.

Трибунала панă официальнăй документсенчен çакă курăнса тăрать: 1940 çулхи майăн 10-мĕшĕнче 4 сехет те 30 минут ирхине нимĕç самолечĕсем Бельгипе Голландири аэродромсемпе ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă, вара 8 сехет те 30 минутра çеç Германи посолĕ Бельгин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ патне пынă. Бельгин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Спаак ăна çапла каланă: малтанхи сăмаха эпĕ хам калатăп, тенĕ. Министр Германи посолне Бельги правительствин протестне вуласа панă. Çав протеста çапла каланă: «Юлашки 25 çул хушшинче Германи нейтралитет тытакан Бельгие пкĕ хут тапăнатъ. Халь пулса иртекен ĕç 1914 çулхи агрессирен те ирсĕртĕрех. Бельги правительствине халĕ ниепле ультиматум та, нимĕнле нота та, нимĕнле протест та паман. Бельгие килсе тапăнсан çеç Бельги правительстви Германи 1937 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче панă обязательствăна, вăрçă пуçланнă вăхăтра çĕнетнĕскере, пăсни çинчен пĕлчĕ. Германи тунă агресси пĕтĕм тĕнчене тарăхтарать, ăна нимĕнпе те тӳрре кăларма çук. Ку ирсĕр ĕçшĕн историре Германи ответлă пулать».

Трибунал ыйтнă тăрăх, Роберте Германи посолĕ Бельгин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне панă протеста вуласа кăтартать. Гитлерла кавăрлашуçăсем çав нотăра çапла каланă: Бельгие, Голландие тата Люксембурга акăлчансемпе франпузсем йышăнса илме шутлаççĕ, çавăнпа та эпир, çав çĕршывсене «нейтралитет тытса пымалла» тăвас тесе, вĕсене акăлчансемпе французсенчен малăрах йышăнса илме шутларăмăр. Çакна тăвас тесе,—каланă нотăра,—Германи правительстви çав çĕршывсене хĕçпăшалла пысăк вăйсем кĕртсе ярать, çавăнпа та хирĕç тăни нимĕн те усă парас çук».

Унтан трибунал Англи айăплаканĕсен представительне Филимор полковника сăмах парать.

Филимор полковник гитлерла кавăрлашуçăсем Грецине Югославие тапăнни çинчен калакан документсене кăтартса парать. Нимĕçсем Грецине Югославие тапăнни, тет айăплакан, Гаагири конвенцие тата 1928 çулхи Келлог-Бриан пактне тӳррĕнех пăсни пулса тăрать. Филимор трибунала Гитлер рейхстагра калана сăмаха аса илтерет. Ун чухне Гитлер Югослави правительствине Югослави тĕрес-тĕкĕлех сыхланса юлĕ тесе ĕнентерĕччĕ. Унтан айăплакан Югослави регенчĕ ячĕпе пулса иртнĕ апатланура Гитлер калана сăмахăн хăшĕпĕр выраннĕсене вуласа парать. Унта Гитлер хăй Югослави çине туслăн пăхни çинчен калана.

Айăплакан 1939 çулта Обер-Зальцбурга пулса иртнĕ канашлуш протоколĕнчи икĕ вырăна ĕç çумне хушма ыйтать. Çав канашлура Гитлер, Риббентроп тата Чиано пулнă. Унта Гитлерпа Риббентроп Италие Югославие хирĕç вăрçă пуçласа ăна хăтĕр мар-ха, тенĕ. Айăплакан каланă тăрăх, вăл вăхăтра Германи хăй те Балкана пырса кĕме хатĕрленсе çитеймен.

Малалла Англи айăплаканĕсен представителĕ Риббентропа, Кейтеле тата Йодле мĕншĕн айăпламаллине уйрăмăн илсе кăтартать. Вĕсем Гитлерпа пĕрле Балкапра вăрçă пуçласа ямалли плана туса хатĕрленĕ тата çав вăрçă пуçласа янă. Айăплакан Риббентроп Югослави премьер-министрĕ патне янă çырăва кăтартса парать. Çав çырура çапла калана: «Германи правительстви ячĕпе тата вăл хушнипе эпĕ Сирĕн превосходительствăна çакна пĕлтересшĕн. Югослави виçĕ державăн пакчĕ çумне хуттăнна май, Германи правительстви Югослави суверенитетне тата унăн территорийĕ тĕрĕслĕхне ялăнах сыхласа усрама хатĕр».

Çав çырăва алă пуснă хыççăн тепĕр 11 кунтан нимĕçсем Югославие пырса кĕнĕ. Германи çарĕн верховнăй командованийĕн канашлăвĕнче Гитлер Югославин сывлăшри вăйĕсене тата Белград хулине май килнĕ таран хăвăртрах пĕтерсе тăкма кирлине кăтартса панă. Çав директивăна пурнăçа кĕртнĕ май Белградăн чылай районĕсене аркатса тăкнă.

Нимĕçсем Грецие пырса кĕни çинчен калана чухне айăплакан çакна палăртнă: Гитлер тата унпа пĕр шутлисем Грецие тапăнма малтанах план туса хунă. Кавăрлашуçăсем хăйсем тапăнма хатĕрленнине пытарма тăрăшнă. Вĕсем Грецие кĕтмен çĕртен пырса тапăнма шутланă. Чи юлашки самантра вара Грецин Берлинри посланникне çапла нота панă: «анкăлчансене хăваласа кăларас тесе», Германи çарĕсем Грецие кĕрсе кайрĕç. Посланник вара çапла каланă: Германи Грецие, Италие пекех, тапăнать, Грени Германие Италие панă ответах парать.

Айăплакан, Германи агрессине кăтартса паракан документсене парса пĕтернĕ хыççăн, çапла калать: гитлеровецсем кĕтмен çĕртен пырса тапăнма хатĕрленнĕ, малтанхи тĕмиçе сехет хушшинче хирĕç тăнине курмасăрах малаллă кусса пыма шутланă. Норвегие, Дание, Бельгие, Голландие тата Люксембурга гитлеровецсем çавăн пек майсемпех йышăнса панĕ. Çак агрессисем ĕнтĕ, тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне, Филимор полковник, гитлерла режимăн агрессиллĕ вăрă-хурăхла характерне кăтартса параççĕ. Çĕрле тапăнасси, малтанах ăнăçусем тăвасси, кайран вара сăлтавсене ăнлантарса парасси,—çаксем ĕнтĕ гитлеровецсен меточĕ. Çакăн пек метод вăл варварсен меточĕ пулса тăрать. Хăйĕн сăмахне тӳрре кăларман тата ытти халăхсен прависене хисеплемĕн государство вăл варварсен государстви пулса тăрать.

Перерыв хыççăн трибунал Америка айăплаканĕсен представительне Олдермене сăмах парать.

Олдермен хăйĕн сăмахĕнче çапла калать: нимĕçсем Совет Союзĕне США-на хирĕç кавар туни çинчен калаçа пама тытăниччĕн, эпĕ трибунала икĕ документ парасшăн. Çав документсене Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинчен тин çеç илтĕмĕр. Вĕсем Австрие хирĕç мĕнле кавăрлашнине кăтартса параççĕ. Çав документсем вĕсем—Британин Берлинри посолĕ Невиль Гендерсон Галифакспа патне янă çыру тата Австрие аккупацилемине хирĕç Англи правительстви протестлени çине Нерат панă ответ.

Олдермен гитлерла Германи ССР Союзне тапăнни çинчен каласа пама тытăнать. Вăл çакна палăртать: Европăри тĕрлĕ çĕршывсене Германи кĕтмен çĕртен вăрă-хурăхла тапăнни нимĕçсен хăйне уйрăм паллăлăхĕ пулса тăрать. Анчах та, тет Олдермен, «агрессин çак юлашки акчĕ, айăплакансене çак тенкел çине лартнăскер», уйрăмах вăрă-хурăхла пулнă.

Ытти документсемпе пĕрлех айăплакан пĕр документа вуласа парать. Ăна 1940 çулхи декабрь уйăхĕнче çырнă. Унта çапла каланă: «Çарăн генеральнăй штабĕн начальникĕ (Гальдер) хĕвелтухăçĕнчи операцисен планĕ çинчен доклад туса пачĕ. Малтанах вăл географи факторĕсем çинчен калаçĕ. Çар техникине тăвакан индустрин тĕп центрĕсем Украинăра, Мускавра, Ленинградра, Фюрер, сутсе-явăн оперативнăй планĕсемпе кĕлĕнсе, çапла калаçĕ: вырăссене мĕнпур фронтра каялла чакма памалла мар. Вырăссен сывлăш вăйĕсем Германи империйĕн территорине пырса тапăнмалла мар тăвичченех хĕвелтухăçнелле наступлени тумалла. Германин сывлăш вăйĕсене, вырăссен çар промышленнăçĕн центрĕсене тапăнма май памалла. Çапла вара эпир вырăссен çарне пĕтерсе тăкса, ăна çĕнĕрен тумалли майсене те пĕтерĕпĕр. Пирĕн çарсен малтанхи хут пырса çапниех тăшманăн пысăк соединенийĕсене пĕтерсе тăмалла. Вырăссене хăйсен тылĕнчи позицисене йышăнма памалла мар. Çак палăртнă операцие 130—140 дивизи тума пултараçĕ».

Çав документа вуласа панă хыççăн трибуналăн каçхи ларăвĕ хупăнать.

ЯМАСИТА ГЕНЕРАЛА СУД ÇАКСА ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин хĕçпăшалла вăйĕсен Филиппин утравĕсем çинче главнокомандующийĕ пулнă Томоюки Ямасита генерала суд çав утравсем çинче тунă тискер ĕçсемшĕн айăплă тесе йышăннă, вара ăна çакса вĕлермелле приговор йышăннă.

ФРАНЦИРЕ БАНКСЕНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ПИЧЕТЛЕСЕ КАЛАРНĂ

ПАРИЖ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС корреспондентĕнчен, телефонпа). Паян «Журналь Офисиель» ятлă журналта банксене национализацилесси çинчен калакан закона пичетлесе кăларнă. Вăл закона правительство тăратнă, Учредительнăй пуху унăн хăшпĕр вырăнĕсене тӳрлетнĕ. Çапла ĕнтĕ, çав проект халь закон пулса тăнă. Паян ирхине çав национализацилеме банксене правительство комиссарĕсене лартнă. Банксене национализацилесси çинчен калакан закона Учредительнăй пухуру правительствăпа компромисс туса йышăннă. Правительствăпа хирĕçес мар тесе тата банксене национализацилес ĕçе чарса тăрас мар тесе, Учредительнăй пухуру малтанлăха 5 банка çеç национализацилеме йышăннă. Правительство хăй ĕнчен Учредительнăй пухуру çакăн пек тӳрлетме сĕннине йышăннă: 1) национализацилекен банксен акционерĕсене правительство сĕннипе сахалтарах укçа тӳлемелле; 2) Учредительнăй пухуру малашне ытти банксене те национализацилес ыйтăва тата пама пултарать; 3) Франципри пĕтĕм кредит ĕçне контроллеме тăвакан кредит советĕн председателĕ пулса ĕçлеме финанс министрне мар, экономика министрне лартмалла (правительство финанс министрне лартма сĕннĕ пулнă). Ыран министрсен совечĕ электричество энергийĕ тăвас ĕçе национализацилес ыйтăва сӳтсе-явма пуçлĕ, тесе шутлаççĕ.

Америка журналĕ Франкона тăрă шыв çине кăларакан документсем гичетлесе кăларнă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Нумай журналист Гервази «Кольерс» ятлă журнала темиçе документ пичетлесе кăларнă. Çав документсенчен Франкон фашистла правительстви, Германипе Италипе майлă пулса, Пĕрлешнĕ наципе хирĕç вăрçăна тухма шутлани курăнать. Гервази калăнă тăрăх, çав документсене Америка çарĕсем тĕнĕл держависен архивĕсенче тупнă, хальхи вăхăтра вĕсем Америкăн государство департаменченĕпе çар министерстви аллинче тăраççĕ.

1940 çулхи августăн 10-мĕшĕнче Германин Мадридри посолĕ фон Шторĕр Берлина çакăн пек телеграмма янă: «Испани правительстви çапла каларĕ: пирĕн паллă условисене пурнăçа кĕртсен, эпир, вăрçман çĕршыв политикине пăрахса, вăрçа Германипе Италипе майлă пулса хуттăнма хатĕр... Вăрçа хуттăнмашкăн Испани правительстви çакăн пек условисем лартать: 1) Гибралтарпа Франци Марокки тĕлĕпе тата Алжирăн пуринчен ытла испанецсем пурăнакан пайĕсем тĕлĕпе Испанин наципе территорилĕ требованийĕсене пурнăçа кĕртмелле, Рио-де-Оро территорийĕпе Гвинея заливĕнчи колонисен территорине пысăклатмалла. 2) Испание вăрçа хуттăнма çарна ытти енчен пулăшмалла».

1940 çулхи августăн 15-мĕшĕнче Франко Муссолинине çакăн пек çыру янă: «Хаклă дуче! Çак вăрçа пуçланнăранпах эпир, хамăр алăри вăйсемпе усă курса, май килсенех вăрçа хуттăнма хатĕрленес тĕлĕпе пĕтĕм вăйпа тăрăшрăмăр... Итали вăрçа хуттăнна хыççăн пирĕн лару-тăру уçăлăрах пулса тăчĕ. Эпир сыхă тăратпăр, хальхи çапăçман çĕршыв пулса тăтăмăр, çакă пĕтĕм тĕнчери лару-тăрава чылай улăштарĕ... Франци паранни тата Çурçĕр Африкăри территорисене урăхла майлаштарасси сирĕн превосходительствăна Испанин территорийĕ тĕлĕпе кăларса тăратакан требованийĕсем çинчен пĕлтерме мушса тăраççĕ. Испани çĕнĕ йĕрке тăвас ĕçре (республикăна аркатса тăкас ĕçре) хăйĕн тӳпине хыврĕ; кунсăр пуçне вăл, хамăран пĕрлехи тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре тивĕçлĕ вырăн йышăнма хатĕрленнĕ май, хăйĕн тепĕр тӳпине хывма хатĕрри çинчен пĕлтерет. Çакна тума май пултăр тесе, эпир Германирен вăрçа хуттăнма кирлĕ условисем туса пама—Испание тĕрлĕ япаласем парса тăрас ĕçе май килнĕ таран лайăхлатмашкăн пур вăйпа та тăрăшма пултăрăмăр. Çакна шута илсе, эпĕ хамăран хăрушсăрлăхпа аслăлăха сыхлас тĕлĕпе пирĕнпе пĕр шухăшлă пулма пултăрăмăр. Пирĕн çар ĕçе-хĕле çитерсе тăкнă, ăна çĕнĕрен тумалли майсене те пĕтерĕпĕр. Пирĕн çарсен малтанхи хут пырса çапнипех тăшманăн пысăк соединенийĕсене пĕтерсе тăмалла. Вырăссене хăйсен тылĕнчи позицисене йышăнма памалла мар. Çак палăртнă операцие 130—140 дивизи тума пултараçĕ».

Çав документа вуласа панă хыççăн трибуналăн каçхи ларăвĕ хупăнать.

ЯМАСИТА ГЕНЕРАЛА СУД ÇАКСА ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин хĕçпăшалла вăйĕсен Филиппин утравĕсем çинче главнокомандующийĕ пулнă Томоюки Ямасита генерала суд çав утравсем çинче тунă тискер ĕçсемшĕн айăплă тесе йышăннă, вара ăна çакса вĕлермелле приговор йышăннă.

ФРАНЦИРЕ БАНКСЕНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ПИЧЕТЛЕСЕ КАЛАРНĂ

ПАРИЖ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС корреспондентĕнчен, телефонпа). Паян «Журналь Офисиель» ятлă журналта банксене национализацилесси çинчен калакан закона пичетлесе кăларнă. Вăл закона правительство тăратнă, Учредительнăй пухуру унăн хăшпĕр вырăнĕсене тӳрлетнĕ. Çапла ĕнтĕ, çав проект халь закон пулса тăнă. Паян ирхине çав национализацилеме банксене правительство комиссарĕсене лартнă. Банксене национализацилесси çинчен калакан закона Учредительнăй пухуру правительствăпа компромисс туса йышăннă. Правительствăпа хирĕçес мар тесе тата банксене национализацилес ĕçе чарса тăрас мар тесе, Учредительнăй пухуру малтанлăха 5 банка çеç национализацилеме йышăннă. Правительство хăй ĕнчен Учредительнăй пухуру çакăн пек тӳрлетме сĕннине йышăннă: 1) национализацилекен банксен акционерĕсене правительство сĕннипе сахалтарах укçа тӳлемелле; 2) Учредительнăй пухуру малашне ытти банксене те национализацилес ыйтăва тата пама пултарать; 3) Франципри пĕтĕм кредит ĕçне контроллеме тăвакан кредит советĕн председателĕ пулса ĕçлеме финанс министрне мар, экономика министрне лартмалла (правительство финанс министрне лартма сĕннĕ пулнă). Ыран министрсен совечĕ электричество энергийĕ тăвас ĕçе национализацилес ыйтăва сӳтсе-явма пуçлĕ, тесе шутлаççĕ.

Авăн çапассине хăвăртламалла

ЕТĔРНЕ. Район государствăна тырă тăратас енĕпе республикăра малти вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать пулин те, авăн çапас тĕлĕшне вара юлса пырать. Районра малта пыракан «Восток», «Путь Ленина», «Парижская Коммуна» колхозсем авăн çапса пĕтернĕ, государство умĕнчи пур парăмсене те тӳлесе татнă. Халĕ ку колхозсем тăрăшсах вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеççĕ.

Анчах районри пур колхозсем те авăн çапса пĕтерме васкамаççĕ-ха. Елкинăри «Чуваш ЦИК» колхозра МТС молотилки уйăх ытла ĕçлемесĕр ларать. МТС директийĕ те кун пирки нимĕнле мера та йышăнмасть. Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол» колхоз правленийĕ авăна алăпа çапассине йĕркелемен. Çавна пула кунта пухса кĕртнĕ тырăн çурринне те çапман. Çакăн пекех Урапакассинчи «Правда», Пушнарти Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем те авăн çапас ĕçе сӳрекĕн туса пыраççĕ.

Г. ТАМИР.

„Торпедо“ командипе София хулин хутăш команди футболла выляннă

СОФИЯ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян София хулинче совет команди «Торпедо» София хулин хутăш командипе футболла выляннă. Унччен виçĕ кун хушши юр çунă. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе София гарнизонĕн боецĕсем тăрăшнипе футбол хирне хатĕрлесе хунă, анчах çапах та унта юр юлнă. Питĕ сивĕ пулнă пулин те, стадионра халăх тулликех пулнă. Хисеплĕ хăнасем хушшинче Болгари правительствин членĕсем, Г. М. Димитров, Совет посланникĕ Кирсанов юлташ, Союзниксен Контроль Комиссийĕн председатель заместителĕ Барлозов генерал-полковник тата ыттисем те пулнă.

8-мĕш минутра Болгари командин тапăнакан центрĕ Ласков «Торпедо» хăшне пĕрле çапса кĕртнĕ. Вăйă хăвăртлăхлĕ ĕненĕсемĕн ĕçсе пынă. Пĕрле пĕр хăнка патĕнчен тепĕр хăнка патне вĕçе-вĕçе кайнă. Çивĕч комбинацисем пулапула иртнĕ. «Торпедо» командин тапăнаканнĕсем София командин хăшне темиçе хут та пенĕ. Анчах та Костев хăпаçа, çав тери лайăх выляса, Болгари командине хăйĕн хăшне пĕрле çапса кĕртесрен çăла-çăла хăварнă. Унтан «Торпедо» команди 11 метртан пенĕ. Хисеп 1:1 пулса тăнă. 40-мĕш минутра Петров София командин хăшне иккĕмĕш хут пĕрле çапса кĕртнĕ.

Вăйăн иккĕмĕш çурринче те малтанхи пекех хăвăрт выляннă. «Торпедо» команди юрлă та яка çĕртĕ выляма хăнăхса çитнĕ. 12-мĕш минутра Петров виççĕмĕш хут çапса кĕртнĕ; 22-мĕш минутра Яковлев 4-мĕш хут çапса кĕртнĕ. 30-мĕш минутра «Торпедо» командин хŭтĕлекенĕсем штрафлă площаднăра йăнăш тунă пирки, София команди иккĕмĕш хут пĕрле çапса кĕртнĕ. Анчах ун хыççăн икĕ минутранах София команди хăшне патне чупса кайнă Пономарев 5-мĕш хут пĕрле çапса кĕртнĕ. 40-мĕш минутра вăлах София командин хăшне 6-мĕш хут çапса кĕртнĕ. Вăйă пĕтес умĕн «Торпедо» хăшне София команди 11 метртан виççĕмĕш пĕрле çапса кĕртнĕ. Вара 6:3 хисеппе вăйă пĕтнĕ. София команди вăйăна питĕ лайăх хатĕрленнĕ пулнă. Вăл уннчен Бухарест хулин хутăш командине çĕнтернĕ, Белград командине икĕ хут выляса, пĕр хутĕнче ăна çĕнтернĕ, тепĕр хутĕнче вара хăйне çĕнтернĕ.

ГРЕЦИ ПАРЛАМЕНТНЕ СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН СОФУЛИС КАЛАНИ

АФИНЫ, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Премьер-министр Софулис Греци парламентне 1946 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче суйлăпăр тесе хăй каланине халĕ тепĕр хут çирĕплетсе панă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99 ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 04027

Типография № 1 Управления ... ЧАССР. Зак. № ... 42. 1 ... Цена ...